Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

103 (7634) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи декабрĕн (раштав) 17-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Раççейре

Ипотека кредитне тӳлеймесен

РФ Правительстви ĕç çухатнипе е ĕç укçи пĕчĕкленнипе ипотека кредичĕ тӳлеймен граждансене пулăшма шантарать.

Çĕр-шывра пĕтĕмпе 800 пин çемье 1 триллион тенкĕлĕх кредит илнĕ. Халлĕхе çак граждансен 2 проценчĕ йывăрлăхсемпе тĕл пулнă. Тӳлейменнисен хисепĕ малашне палăрмаллах ӳсме пултарать.

Влаç мĕн сĕнет-ха? Йывăрлăха лекнĕ граждансене пĕр çуллăх отсрочка параççĕ. Банксене вара патшалăх ипотека кредичĕсемпе гарантипе тивĕçтерет. Çавăн пекех амăшĕн капиталĕпе виçĕ çул çитиччен усă курма ирĕк параççĕ. Унпа ипотека кредитне саплаштарма юрать.

Çавăнпа та ипотека кредичĕ илнисен пăлханма сăлтав çук.

Цифрăсен чĕлхипе

Çитес çултан чикĕ леш енче кăларнă автомашинăсене çĕр-шыва кӳрсе килнĕшĕн тӳлемелли пошлина 25 процентран 30 процента çити ӳсет. Кивĕ автомашинăсем шутне малтанхи пек 7 çулхисене мар, 5 çултисене кĕртеççĕ. Вĕсемшĕн тӳлемелли пошлина виçи 2 хут хăпарать.

Çитес çул патшалăх кашни пациента тӳлевсĕр сиплеме 7600 тенкĕ тăкаклать. Кăçалхи виçепе танлаштарсан 70 процент ытларах.

Чикĕ леш енче кăларнă техникăна çĕршыва кӳрсе килнĕшĕн тӳлемелли пошлина виçине 15 процент ӳстереççĕ. Çак йĕрке 9 уйăх хушши вăйра пулать.

ЧР Президенчĕн Çырăвĕ

«Чăваш Ен ӳсĕмĕсем – кашнин пуçарулăхĕнче»

Ĕнер Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ тата Чăваш Ен çыннисем ячĕпе Çырупа тухнă. Паллă ĕнтĕ, тĕнчере финанс кризисĕ вăй илет. Çавна май Çырăвăн тĕп тĕллевĕ – çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче вырăнти влаç тата самоуправлени органĕсен ĕçне-хĕлне йĕркелесе пырасси, çынсен хальхи пурнăç шайне сыхласа хăварасси.

Пирĕн республикăн хальхи ӳсĕмĕсем пĕчĕк мар. Чылай çĕрте вĕсене ĕмĕтленме кăна пултараççĕ. Газ кĕртессипе, çулсем тăвассипе нумай ĕç пурнăçланă. Çурт-йĕр тăвассипе, культура, сывлăха сыхлас енĕпе те сулмаклă утăмсем курăмлă. Республикипе кăçалхи январь–ноябрь уйăхĕсенче уйăхри вăтам ĕç укçи 11600 тенкĕпе, врачсен 14711 тенкĕпе, учительсен 9100 тенкĕпе танлашнă.

Тĕнчери финанспа экономика кризисĕ Чăваш Ен экономики çине те витĕм кӳмесĕр тăма пултараймасть. Апла пулин те çак лару-тăруран тухма пур майсемпе те усă курма палăртнă. Предприятисенче ĕçлекенсен хисепне чакарни, ĕç укçине вăхăтра тӳлеменни пулмалла мар.

Çырура тĕнче кризисĕнчен тухмалли тĕп çул-йĕре палăртнипе пĕрлех промышленность, ял хуçалăхĕ, строительство, культура, вĕрентӳ, федераллă центрпа ĕçлесе пырас ĕçсене те хак панă, ку енĕпе малашлăхра туса ирттермелли ĕçсем пирки те каланă.

Районта: ĕнер, паян, ыран

Продукци туса кăларасси ӳсет

2008 çулхи январь–ноябрь уйăхĕсенче районти предприятисем 1463558,4 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, ку вăл 158 процентпа танлашать. Ял хуçалăх предприятийĕсем 350416 пин тенкĕлĕх, промышленность предприятийĕсем 1113142 пин тенкĕлĕх продукци туса хатĕрленĕ. Тăнăç ĕçлесе пыракан предприятисем шутĕнче «Муркашри кирпĕч завочĕ», «Муркашри сĕт-çу завочĕ» уçă акционер обществисем, «Сеспель» хупă акционер обществи.

Ятсен хит-парачĕ

Çулталăк пуçланнăранпа районĕпе 184 ача çуралнă. Иккĕмĕш ача 124 çемьере, виççĕмĕшĕ 53 çемьере, тăваттăмĕшĕ 10 çемьере, пиллĕкмĕшпе улттăмĕшĕсем виçшер çемьере кун çути курнă. 3 çемьере йĕкĕреш ачасем çуралнă: 4 арçын ача тата 2 хĕр ача.

Ачасене ят панине илес пулсан, çĕнĕ ятсем курăнаççĕ: Азалия, Виолетта, Злата, Мирослава, Таисия, Ярослава, Артемий, Всеволод, Глеб, Радим, Родион, Тимофей. Арçын ачасем хушшинче сайра тĕл пулакан ятсем татах нумайрах, вĕсем хушшинче вырăслисем сахал мар: Давид, Богдан, Федор, Арсений.

Хĕвел тухăçĕнчи ятсем те тĕл пулаççĕ: Амина, Дилиян, Мухаммед, Самира.

Чи нумай тĕл пулаканнисем хушшинче вара çаксене асăнмалла: Дарья (16), Анна (13), Анастасия (12). Арçын ачасем хушшинче малта Максим (13), Дмитрий (10), Иван (10).

Вăтам ĕç укçи

Районти организацисенче уйăхри вăтам ĕç укçи шайĕ, пĕчĕк предпринимательство субъекчĕсене шутламасăр, 8527 тенкĕпе танлашать. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, ку вăл 149,3 процентпа танлашать. Чăваш Республикипе ку кăтарту 11321,4 тенкĕ, иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 35,8 процент ӳснĕ.

Чи пысăк ĕç укçи шайĕ районĕпе продукци тирпейлекен промышленноçра. Вăл районăн вăтам кăтартăвĕнчен 2,3 хут пысăкрах.

Районти организацисенче 6170 çын ĕçлет. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтрин 96 проценчĕ чухлĕ е 267 çын сахалрах.

Республикăра пĕрремĕшсем

Кадетсен балĕ

2008 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкар хулинче кадет класĕсен республикăри 2-мĕш Георгиевски балĕ иртрĕ. Унта Муркаш лицейĕнчи 11-мĕш кадет класĕнче пĕлӳ пухакансем те хутшăнчĕç.

«Чи лайăх бал композицийĕ» номинацире Муркаш лицейĕн воспитанникĕсем çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç. «Чи лайăх бал мăшăрĕ» номинацире вара Иван Михайловпа Лия Краснована çитекенни пулмарĕ.

Кадетсене конкурса Людмила Александровна Митрофанова хореограф хатĕрленĕ.

А. ФЕДОРОВ,
кадетсен класĕн воспитатель-наставникĕ.

2010 çулта – халăх çыравĕ

Çырава паянах хатĕрленеççĕ

Тунти кун 2010 çулта Раççейре халăх çыравне ирттерес енĕпе ĕçлекен районти комисси ларăвĕ пулнă. Ăна комисси ертӳçи Ю.А. Иванов ертсе пынă.

Ларура çырав ирттерес енĕпе районта 2009 çулта тумалли ĕçсен планне çирĕплетнĕ.

Комисси ертӳçин çумĕ З.И. Виноградова район администрацийĕн пуçлăхĕ 2008 çулхи апрелĕн 14-мĕшĕнче алă пуснă 249 № «Район территорийĕнче 2010 çулхи Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне ирттерес енĕпе тумалли хатĕрленӳ ĕçĕсем çинчен» йышăнава пурнăçланă пирки пĕлтернĕ.

Çамрăк çемьесем пулăшу илеççĕ

«2012 çулччен яла социаллă аталантарасси» программăпа Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерстви федераллă бюджетран пирĕн района хушма 961,65 пин тенкĕ куçарнă. Унпа Муркаш районĕнчи ялсенче пурăнакан 4 çын çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма усă курнă. Тата çак программăпа килĕшӳллĕн ялта пурăнакан тата ĕçлекен пĕр çамрăк çемье валли Ял хуçалăх министерстви урлă 324,390 пин тенкĕ, Муркаш район администрацийĕ 446, 4 пин тенкĕ уйăрса панă.

Малашне те мал ĕмĕтпе пурăнакан-ĕçлекен çамрăксене патшалăх пулăшĕ. Ӳркенмелле мар çеç.

В. ШАПОШНИКОВ, Н. НИКОЛАЕВА
хатĕрленĕ.

Официально

Центральная избирательная комиссия
Чувашской Республики
ПОСТАНОВЛЕНИЕ

11.12.2008 г. № 34/231-IV
г. Чебоксары

О возложении полномочий избирательной комиссии муниципального образования Ильинское сельское поселение Моргаушского района на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию

В соответствии с пунктом 4 статьи 24 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», пунктом 4 статьи 12 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», на основании ходатайства Собрания депутатов Ильинского сельского поселения от 08 декабря 2008 года Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики **постановляет:**

1. Возложить полномочия избирательной комиссии муниципального образования Ильинское сельское поселение Моргаушского района на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.

2. Направить настоящее постановление в средства массовой информации для опубликования.

Председатель Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики Л.Н. ЛИНИК.
Секретарь Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики Е.Б. ШЕВЛЯГИНА.

Информаци кунĕ

Ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ

Паян районта пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн темисем – ЧР Президенчĕ Патшалăх Канашне янă çыру, Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ çинчен тата ĕçкĕпе иртĕхнине хирĕç кĕрешесси çинчен.

Информаци ушкăнĕсем Катькас, Турай, Мăн Сĕнтĕр, Муркаш, Шетмĕпуç ял тăрăхĕсенче пулаççĕ.

Çырăнтару – 2009

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.

Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!

Социаллă хӳтлĕх

21 инвалид пулăшăва тивĕçнĕ

Нумаях пулмасть Инвалидсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ иртрĕ. Çак куна халалласа районта та тĕрлĕ мероприятисем сахал мар пулса иртрĕç. Кунпа пĕрлех çавна та каласа хăвармалла. Инвалидсен кунĕ ячĕпе республикăри ĕçлеме пултарайман 688 сусăр çынна ятран укçа парса пулăшнă. Вăл шутран ку пулăшăва районти 21 инвалид тивĕçрĕ. Вĕсене пĕтĕмпе 26130 тенкĕ уйăрса панă.

Кун пек хӳтлĕх пулăшăвне хевтесĕр юлнă çынсем Раççей Пенси фончĕн укçи-тенки шучĕпе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çуллен çирĕплетекен Социаллă программа тăрăх 2001 çултанпа тивĕçеççĕ.

Çакна та аса илтермелле. Кама пулăшассине тата унăн виçине районти социаллă хӳтлĕх пайĕ палăртать. Унччен вара инвалидăн заявлени çырса парас пулать.

В. ШАПОШНИКОВ.

Фестиваль

Çемьепе вуласан интереслĕрех

«Çĕнĕ çула - кĕнекепе» вулав фестивалĕ Муркашри ачапăча библиотекинче питĕ интереслĕ иртрĕ. Çак мероприятие çемье вулавĕн йăлисене çĕнĕрен пуçарса ярас, çемьери ăс-хакăл çыхăнăвне кĕнекесем урлă аталантарас, библиотекăпа çемье пĕрле ачасене кĕнекесем юратма вĕрентес тĕллевпе йĕркеленĕ. Библиотекăна вулама юратакан ачасем ашшĕ-амăшĕсемпе кăна мар, аслашшĕ-асламăшĕсемпе те пухăнчĕç. Çавăнпа та фестивалĕн юлашки кунĕнче районта иртнĕ «Пĕрле вулама савăнăçлă» конкурсăн пĕтĕмлетĕвĕсемпе те паллашма тӳр килчĕ.

«Манăн çемьен юратнă кĕнеки» номинаци çĕнтерӳçи Турай шкулĕнче вĕренекен Екатерина Катинова пулса тăчĕ (7-10 çулхисем хушшинче). 11-13 çулхисем хушшинче мала Муркаш шкулĕнче вĕренекен Анжела Григорьева тухрĕ, аслă ӳсĕмри ушкăнра – Кристина Маринова (Муркаш шкулĕ).

«2008 çулхи вулакан çемье» номинацинче çаксем палăрчĕç: Муркашра пурăнакан Романовсен çемйи (1-мĕш вырăн), иккĕмĕш вырăна Москакассинчи Сибяковсен çемйи тухрĕ, виççĕмĕшне – Мăн Сĕнтĕрти Отеновсем.

Н. НИКОЛАЕВА.

Саламлатпăр

Юратнă аннене, кукамине, мамака – Шупуç ялĕнче пурăнакан **Зоя Васильевна ЦВЕТКОВАНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Пурнăçăн анлă çулĕпе шанчăклă утма çирĕп сывлăх, пархатарлă кун-çул, тулли телей сунатпăр. Сана чĕререн юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Тавтапуç сана пуриншĕн те.

Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем.